# Кĕçĕн класри ачасене сăвă çырма вĕрентесси

## *(Методика кăтартăвĕ)*

***Т.Г. МАРКОВА, С.В. ВОЛКОВА***. *Елчĕкри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулти кĕçĕн класс учителĕсем*

**Кӳртĕм.**

Хальхи саманара учитель умне тухса тăракан тĕп задачăсенчен пĕри – шкултан пултаруллă, пысăк ăслă, талантлă ачасем хатĕрлесе кăларасси, вĕсене харпăр хăй тĕллĕн творчествăлла, çĕнĕлле шухăшлама, çуралнă шухăшсене йĕркипе, вырăнлă сăмахсемпе çырса кăтартма вĕрентесси.

Час-часах çакăн пек ыйтусем çуралаççĕ:

– мĕншĕн ачасен творчествăлла ĕçлес туртăм çӳлти шайра мар?

– мĕншĕн вĕсем тĕрлĕ конкурссене сахал хутшăнаççĕ?

Çак ыйтусем çине хурав шыранă май хамăр ума тĕллев лартрăмăр – кĕçĕн çулхи вĕренекенсене творчествăлла аталантармалла, çав ăсталăх патне кирлĕ «уçă» тупмалла. Кашни ача хăйне евĕр пултаруллă. Анчах таланта çут çанталăк пытарса упраса тăрать тейĕн. Учителĕн çавна уçса пама тăрăшмалла.

Ӳсĕм ĕçлемесĕр пулмасть. Ачасен пултарулăхне кĕçĕн класра вĕреннĕ чухнех аталантарма пуçламалла. Çак çулсенче тунă пĕрремĕш ӳсĕмсем – вĕренекенсенче шанчăк çуратаканнисем, малалла ĕçлеме хистекеннисем. Ачасен чунĕсенче мĕн акатăн, çавă шăтать тесе ахальтен каламан.

Хамăрăн методика кăтартăвĕнче ăс-хакăл, ăсталăх енĕпе, тавра курăм тĕлĕшĕнчен малта пыракан пултаруллă ачасене сăвă çырма вĕрентнине тата унăн вĕренӳри пĕлтерĕшне уçса парасшăн. Çак темăпа ĕçленĕ май эпир «Халăх шкулĕ» журналăн чылай кăларăмĕпе паллашрăмăр. Унти статьясем пирĕншĕн шанчăклă пулăшуçăсем пулса тăчĕç.

**Сăвă çырма вĕрентес ĕçĕн йĕрки.**

***Мĕнрен пуçласан лайăх.*** Кирек мĕнле ĕçе пуçласа яма та малтан йывăр пек туйăнать, анчах та йĕркене кĕртсе çитерсен, çакă мĕнле çитĕнӳсем тума пулăшнине курсан тăрăшни харама кайманни, ачасен кашни çитĕнĕвĕ чуна савăнтарать.

Сăвă çырма вĕрентес ĕçе пĕрремĕш класрах пуçлатпăр. Тин анчах шкул урати урлă каçнă пĕчĕк шăпăрлансен сăмах йышĕ пĕчĕкрех, пĕр-пĕр пулăма çыхăнуллă каласа пама та пĕлсех каяймаççĕ-ха. Çакна пула ума тĕрлĕ чăрмавсем тухса тăраççĕ. Малтанхи тапхăрсенче ачасен пуплевне пуянлатас тĕлĕшпе тупмалли юмахсемпе, ваттисен каларăшĕсемпе чылай паллашрăмăр. Сăпка юррисемпе юмахсем итлеттерни чăваш чĕлхин янăравлăхĕпе çепĕçлĕхне, хăйне евĕрлĕхне туйтарма пулăшрĕ. Ача-пăча сăмахлăхĕн тĕрлĕ жанрĕсемпе паллашнă май ачасен чĕлхи те якалма пуçларĕ, курни-илтнине те вĕсем сыпăнтарса калама хăнăхса пычĕç. «Тетте» журналпа «Тантăш» хаçатăн кашни номерĕ пире çул уçса пыраканпа пĕр танах пулчĕç. Кунти сăвăсене вуласа pană май ачасене ***рифма*** сăмахпа паллаштартăмăр. Малтанхи вăхăтра хатĕр рифмăсене сăнарăмăр: *пулă – тулă – хулă, вăлта – калта, арман – тăман.* Каярах вĕренекенсем хăйсем рифмăсем тупма пуçларĕç.

***«Кам ытларах рифма тупать»*** евĕр вăйă-хăнăхтарусем ирттерни питĕ вырăнлă. Ача ачах вăл. Кашниййĕн малти, пĕрремĕш пулас килет. Кунта çакна асăрхаттарса хăвармалла: вĕренекенсем каланă кашни сăмаха итлесе йăнăшсене тӳрлетсе пымалла.

***Ик йĕркеллĕ сăвă хайласси.*** Тепĕр тĕрлĕ ĕç те тума хăнăхса пытăмăр. Доска çине пĕр-пĕр сăввăн юлашки сăмахĕсене çырнă. Тĕслĕхрен: *çăвать, хурать.* Ачасен çак сăмахсем умне çĕнĕ сăмахсем хушса ик йĕркеллĕ сăвă хайламалла. Хатĕр ĕçсем:

Куллен шурă юр *çăвать,*
Çĕре хупласа *хурать.*

Çĕр çине шур юр *çăвать,*
Вăл ăна витсе *хурать.*

***Сăвă çырма вĕренес туртăма вăйлатас тĕлĕшпе*** ачасем валли çыракан поэтсен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа паратпăр. Паллă поэтсен сăввисене вуланă май ачасене автор мĕнле шухăш-кăмăлпа çырнине, тавралăха еплерех хакланине, сăнарлăх мелĕсемпе мĕнле усă курнине

асăрхама хăнăхтармалла. Чĕлхе илемлĕхне сăнас ĕç пирки те манмалла мар. Ачасен авторпа пĕрле пăшăрханмалла, савăнмалла, тĕлĕнмелле, шухăша каймалла. Ку вара пуçламăш классемшĕн çăмăлах мар, апла пулин те пултарулlă ачасенче кирлĕ туйăмсем çуралаççех.

***Вĕренсе пынă май ĕçсен тĕсĕсем улшăнса, йывăрланса пыраççĕ.*** «Шкул пурнăçĕ» тема пуриншĕн те питĕ çывăх. Çак темăпа ачасене сăвă çырса пăхма сĕнмелле. Сăввăн пĕр йĕрки хатĕр. Ачасен шухăша малалла тăсса, рифмăсене тĕпе хурса хăйсен сăвă шăрçаламалла. Вĕренекенсем шкул пурнăçне еплерех курни вĕсем хайланă сăвăсенче палăраççĕ.

*Эпĕ шкулта вĕренетĕп,*
Кулленех унта çӳретĕп.
Вулама-çырма пĕлетĕп,
Шутлама та тĕшмĕртетĕп.

*Эпĕ шкулта вĕренетĕп,*
Лайăх паллăсем илетĕп.
«Пиллĕк», «тваттă» паллăсем –
Манăн çывăх ютлашсем.

*Эпĕ шкулта вĕренетĕп,*
Ӳкерме те халь пĕлетĕп.
Хитре çырма, шутлама,
Кунсерен ăс-тăн пухма.

Сăвă çырассин вăрттăнлăхĕсене майĕпен уçса пынă май 3–4 классенче кашниех харпăр хăй тĕллĕн ĕçлеме вĕренсе пыраççĕ. Çивĕч ăслă ачасем хăйсене çывăх темăсемпе, çывхарса килекен пĕр-пĕр уявпа сăвăсем çырма пикенеççĕ. Ытларах чухне вĕсем ялан куракан япаласемпе тус-тăвансем çинчен çырма тăрăшаççĕ. Акă еплерех пулчĕç пĕрремĕш «çунатлă» сăвăсем.

**Кукка**
Ман юратнă кукка пур,
Пит ĕçчен те вăл маттур,
Бригадир пулса ĕçлет,
Çынсене ĕçлеттерет.

Вăл пире пит юрататъ,
Кучченеçпе хăналатъ. *(Иванова Таня)*

**Аннем**

Мĕн-ши çĕр çинче çемçи?
Вăл, паллах, анне алли.
Мĕн-ши пурнăçра кирли?
Аттепе аннем пурри. *(Федотова Катя)*

**Атте**

Манăн атте пит маттур,
Пур ĕçре те вăл правур.
Тăрăшать подстанцинче,
Çутă парать килсене.
Тетепе иксĕмĕре
Вĕрентет мĕнпур ĕçе:
Пăта çапма, вут çурма,
Спортпа çывăх туслашма.
Юрататăп аттене,
Хисеплетĕп сăмахне,
Çавăнпа та аттене
Манас çук эп ĕмĕрне. *(Игнатьев Саша)*

**Асанне**

Асанне пурнать ялта,
Пур ĕçре те вăл малта.
Ирхине ирех тăрать,
Выльăх-чĕрлĕхне пăхать.
Ĕнине суса кĕрет,
Ăшă сĕтне ĕçтерет,
Яшкине лартса ярать,
Тутлă çимĕçпе сăйлать. *(Данилов Андрей)*

**Кил ăшши**

Кукаçипе кукамы
Маншăн халĕ кил ăшши.
Вĕсем юнашар пулни –
Çут тĕнчере чи хакли.
Кукаçи пире ялан

Тĕрлĕ ĕçе вĕрентет.
Кукамай çакна курсан
Чун-чĕререн хĕпĕртет. *(Головин Кирилл)*

Сăвăсене çырнă чухне вĕренекенсем тĕрлĕ йывăрлăхсемпе тĕл пулаççĕ: кашни йĕркере сыпăксене тĕрĕс пăхăнса пырасси, сăмахри пусăмсене пĕр пек йĕркелесси, сюжета тытса пырасси, содержание аталантарасси тата сăвва вĕçлесси. Кун пек самантсенче вĕрентекен пулăшăвĕ кирлĕ. Унăн кашни çĕнĕ сăвва пăхса тухмалла, çитменлĕхсене тĕплĕн тишкермелле. Çавăн пекех ачасене чĕлхери илемлĕх мелĕсемпе паллаштарса чăваш сăмахĕн сăнарлăхне туйма вĕрентмелле.

Тăрăшуллă, мал ĕмĕтлĕ ачасем пурри савăнтарать, вĕсемпе ĕçлес килет. Ачасен хавхаланăвне ӳстерес тĕллевпе ăнăçлă çырнă сăвăсене районта тухса тăракан «Елчĕк ен» хаçатăн «Шăнкăрав» кăларăмне пичетлеме паратпăр. Вĕренекенсем вăл тухасса чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Хаçатра хăйсен сăввисене курсан ачасен çырас туйăмĕ тата та ӳсет, вĕсем учитель сĕнмен темăсемпе те сăвăсем хайлама тытăнаççĕ.

Юлашки çулсенче тĕрлĕ йышши ăмăртусем иртеççĕ. Сăвăçсен конкурсĕсем те вăй илме пуçларĕç. Вĕсене хутшăнма талантлă ачасем яланах хапăл. Игнатьев Александр район шайĕнче иртнĕ «Поэзи çăлтăрĕсем» конкурсра «Вăрçă тематики – автор сăввисенче» номинацире «Вăрçă ан пултăр нихăçан!» сăввипе пĕрремĕш вырăн йышăнма пултарчĕ.

Ачасем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармастпăр. Малалли тĕллевсем – ыран çырасси паянхинчен те лайăхрах пултăрччĕ. Ачасен ĕмĕчĕ – хăйсем çырнă сăвăсене пухса, вĕсене ӳкерчĕксемпе илемлетсе пĕчĕк кĕнеке кăларасси.

**Пĕтĕмлетӳ.**

Сăвă çырма вĕренес туртăм ачасенче пысăк. Мĕн илĕртет-ха вĕсене? Çак пултарулăх сочиненисемпе изложенисем çырнă чухне пулăшать, калас шухăша вĕренекенсем сăвă йĕркисемпе çирĕплетсе параççĕ. Çавăн пекех сăвă

çырма пултарни ачасен пĕлĕвне ӳстерет, ăс-тăнне, шухăшлавне, тавра курăмне, чĕлхине аталантарать, чун-чĕрере çепĕç кăмăл-туйăм çуратать.

Пултаруллă, пысăк ăслă, талантлă ачасем тăван халăхăмăрăн çĕр пин юрри-сăввине татах та пуянлатасса шанас килет.

***ЛИТЕРАТУРА***


*Горшков А.Е.* Сăмах пултăр уçăмлă, шухăш пултăр витĕмлĕ. – Шупашкар, 1981.

*Иванов Н.И.* Поэзи сипечĕ. – Шупашкар. 1982.

*Григорьев Н.Г.* Литература вучахĕ. – Шупашкар, 1986.

*Канюков В.Я.* Писатель ăсталăхĕ. – Шупашкар, 1986.

*Артемьева Т.В., Волков М.К., Петрова Р.Н., Сергеев Л.П.* Тăван чĕлхе программи. Чăваш шкулĕн 1–4-мĕш класĕсем валли. – Шупашкар, 2008.

*Данилова А.Н.* Ачасен пултарулăхне аталантарасси // Халăх шкулĕ. – 2009. – 3 №. – 84–85 с.

*Малышкин Н.Ф.* Елчĕк енĕн пултарулăх çыннисем. – Çĕрпӳ, 2000.

*Адер Николай (Тувалкин).* Ман тĕнче пуçланать çак ялтан... – Шупашкар, 2001.

*Демьянова М.* Вулав урокĕсенче лирикăллă сăвăсемпе ĕçлесси // Халăх шкулĕ. – 2005. – 3 №. – 68–69 с.